Теветкел Н. Нарспи : [сăвă] / Н. Теветкел // Константин Иванова аса илеççĕ / Г. Ф. Юмарт пухса хатĕрленĕ. - Шупашкар, 1990. -С. 242.

Хĕвел, сап-сарă чăкăт çаврашки пек
Ишсе çӳрет ирхи юханшывра.
Кил, вăштăр çил!
Çĕр куççульне эс типĕт,
Манпа пĕрле чун сăнарне шыра!

Çумра çеç çук эп юратакан Нарспиçĕм!
Аçта çухалнă вăл? Хăш чăтлăхра?
Куçĕсенче çиçетчĕ йалтăр çиçĕм:
Ку пурнăçра пулман-тăр – юмахра?

Чĕнмест шăпам — хура çунатлă акăш,
Вĕçет, вĕçет вăл инçете, таçта.
Чечеклĕ туратпе сулкаласа кăшт,
Шур çĕмĕрт çеç манпа пăшăлтатать,

Хутран-ситрен килет аташнă ахрăм,
Янăраса таçти уçланкăран.
Вăл ахрăма шанма та эп пăрахрăм:
Мĕскершĕн улталатăн, сĕм вăрман?

Ман çамрăк кăмăла хускатаканĕ,
Тен, пулчĕ хăмăр пĕлĕтсен йăранĕ?
Асилтерсе ик хăмăр çивĕте,
Чĕртет вăл чун çуратнă ĕмĕте.

Ăçта Нарспи? Хура куçне сăнасчĕ,
Хĕрарăмлăх чиперлĕхне тупса.
Хир тăрăх икĕ хум пек ыткăнасчĕ,
Хĕвел патне алран ал çавтăнса.

Ан тив, вăл тухйипех манпа çӳретĕр,
Ик чĕрене йăл хыптăр икĕ вут.
Вăл куллипе хастарлăх парнелетĕр,
Пире кĕтсе кĕçентĕр çӳрен ут.

Ак çывăхрах илтетĕп: уçă ахрăм
Янăраса чĕнет уçланкăран.
Анчах мĕн калĕ-ши—шанма пăрахрăм
Çӳлти хура çунатлă акăш ман?

Çук! Ĕненетĕп. Тĕнчене ĕненнĕн
Эп ĕненетĕп хамăр Нарспие.
Ун умĕнче, тен, хамăр пĕчĕкленнĕ,
Нумай хут пĕчĕклетнĕ телее.

Чăваш Джокондийĕ!
Сыв пурăн ĕмĕр
Эс халăх чĕринчи юратупа.

Сана çуратнă кăмăллă чĕлхемĕр
Хавхаланма маттур сăнарупа.

Сана кун паракан тăван чĕлхеçĕ
Шăратнă сăмахне çăлтăрсенчен.
Кÿл çийĕпе вĕçсе иртен чĕкеçĕн
Илемлĕ чĕвĕл-чĕвĕл сассинчен.
Валаксенчен шăнкăртатан çăлкуçĕ,
Çурхи кăвак хĕлхемлĕ çеçпĕлсем —
Чĕрешĕн сан пек ĕмĕр çамрăк, уçă,
Çуркуннепе çанталăк чĕрĕлсен.

1969